Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр.

1938 МАЙ 29 ШАМАТКУН
121 (4934) №

Чăваш Коммунĕ

21-мĕш çул тухать

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомăн хаçачĕ

Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67
Ред. заместителĕн 0—88
Редакци секретарĕн 4—40
Дежурнăйăн 6—23

РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама палăртнă кандидатсем

Российйăри Советлă Федеративлă Социалисăмла Республика—Совет Союзĕнчи чи пысăк, чи нумай халăхлă республикă.

РСФСР-та автономлă республикăсем—17, автономлă облаçсем—6, крайсем—5, облаçсем—27 тата нацилĕ округсем — 12 кĕреççĕ. Çак нумай нацилĕ союзлă республика — ленинла сталинла принцип çинче—пур халăхсем те пĕртан правапа усă курни çинче никĕсленсе тăрать.

ССРС территорийĕн пилĕк пайĕнчен тăвата пайне РСФСР йышăнса тăрать, Совет Союзĕнче пуранакан çынсен мĕн пур хисепĕн виçĕ пайĕнчен икĕ пайĕ РСФСР-та пурăнать.

Економика тĕлĕшĕнчен ку республика 11 союзлă республикăсенчен чи вăйли, унăн çĕрайĕнчи пуйанлăхĕсем те çав тери нумай шутланаççĕ. Çавăнпа ĕнтĕ Совет Союзĕнчи промышлĕннăçăн 70 проценчĕ РСФСР-а тивĕçет. Акмали çĕрлаптăкĕ те пысăк. Совет Союзĕнчи мĕн пур çĕр лаптăкĕнчен 70 проценчĕ унăн.

Пирĕн тăван çĕршывăн оборонинче те РСФСР пысăк вырăн йышăнса тăрать. Унăн çыранĕсем хĕрринче тăвата Тинĕс флочĕ тăраççĕ.

РСФСР-та пурăнакан нацисен шутне пĕтĕм тĕнче умĕнче йуратупа хисеп илсе тăракан аслă вырăс халăхĕ кĕрет. Вăл пулăшнипе ĕлĕк пусмарта тертленсе пурăннă нумай мĕлйуңлă нацисем капиталисăм пусмăрĕнчен, тарçă пулса пурăнассинчен хăтăлчĕç.

Российйăн рабочиййĕсемпе хресченĕсем пулăшса пынипе ытти нацисен ĕççыннийĕсем икĕ хутлă пусмăрта—вырăнти нацилĕ буржуази тата Российйăн буржуазийĕпе помещиксен пусмăрĕнче пурăннипе економика тата куљтура тĕлĕшĕнчен кайа йулнине пĕтерсе хучĕç. Ĕлĕк пусмăрта пулнă нацисем вырăс пролетариачĕ пулăшнипе социалисăм патне çул тытрĕç, телейлĕ те ирĕклĕ пурнăçпа пурăнма пуçларĕç.

Ытти халăхсем пекех, нумай хĕн-хур тӳснĕ, аслă социалисăмла революци пуличчен вилсе пĕтес патне çитнĕ чăваш халăхĕ те ирĕклĕхшĕн, формипе—нацилĕ, содержанийĕпе—социалисăмла куљтура тăвассишĕн тата савăнăçлă та телейлĕ пурнăç тăвассишĕн кĕрешессинче куллен пулăшса пынă аслă вырăс халăхне чĕререн йуратса тав тăвать. Чăваш халăхĕ вырăс халăхĕн революцилĕ традицине хисеплет, унăн пуйан куљтурине пысăк хак парать, тăшмансемпе хайаррăн кĕрешме, социалисăм тăвас ĕçе унран вĕренсе пырать.

Чăваш халăхĕн тăшманĕсем—буржуалă-националлиссем, фашиссене сутăвнă троцкиссемпе тата бухаринецсемпе пĕр каварлă пулса, чăваш халăхне вырăс куљтуринчен уйăрма, вырăс халăхĕнчен сивĕтме, çавăнпа пĕрлех капиталисăм йĕркине кайала тавăрма сахал мар тăрăшрĕç. Анчах вĕсене кашниччех çапса аркатса пынă. Чăваш халăхĕ тăшмансем шухăшласа хунă çулпа каймарĕ.

РСФСР Верховнăй Советне суйлас ĕç чăваш халăхĕн пурнăçĕнче пысăк событи пулса тăрать.

РСФСР Верховнăй Совечĕ, вăл—РСФСР влаçĕн аслă тата саккунсем кăларакан органĕ пулса тăрать. Чăваш халăхĕ РСФСР Верховнăй Совечĕн депутатне суйлама хăйĕн чи лайăх ывăл-хĕрĕсене, çĕршыва тата халăха чĕререн йуратакансене, социалисăмшăн, рабочисемпе хресченсен телейĕшĕн пуçне хума хатĕр тăракан çынсене палăртрĕ.

Шупашкарти авторемонтнăй савăтра ĕçлекен рабочисемпе работницăсен, инженерла-техникла работниксен, служăшчисен, çавăн пекех тата Тутаркас районĕнчи Пушкăрт йалĕнчи „Çĕнĕ çул" колхоз членĕсемпе йединоличниксем РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама Шупашкар хула суйлав округĕ тăрăх, Шупашкар хула совет председателне Калинкина йулташа тăратрĕç.

Калинкина йулташ 1901 çулта, чухăн хресчен çемйинче çуралнă. Унăн ашшĕ хăйĕн пĕтĕм ĕмĕр тăрăшне тарçăра иртернĕ. Амĕшне вăл астумасть те. Сакăр çултан пуçласа ĕç шырама кайнă. Хăйĕн ашшĕ пекех Калинкина йулташ революциччен тарçăра пурăннă. Вĕренме те вăл 1927 çулта кăна тытăннă. 1929 çулта партине кĕрет. 1935 çулта маркçисăм-ленинисăм курсĕнчен вĕренсе тухать. Шупашкар хула комитечĕн инструкторĕ пулса ĕçлет. Çак ĕçрен ăна Шупашкар хула совет председателне илеççĕ.

Канаш суйлав округĕ тăрăх РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама Канашри вакунсем йусакан савăтри станочницăстаханăвкăна Антонăва йулташа тăратнă.

Йекатерина Антонăва çамрăк комсомолка. Вăл Сталин самани вăхăтĕнче ӳссе çитĕннĕ. Ун умĕнче ӳсĕм çулĕ анлă та аслă. Йекатерина Антонăвна колхоз пурнăçне активлă хутшăнса ĕçленĕ. Колхозра лайăх ĕçленĕшĕн ăна преми параççĕ. Савăтра та вăл хăйĕн ĕç нормине 140—180 процент тултарса пырать. Темиçе хутчен премиленĕ. Обчăлă ĕçе активлăн хутшăнать. Канаш хула совет членĕ.

Патăрйел суйлав округĕ тăрăх РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама „Хĕрлĕ Туçа" колхоз председателне—орденоносеца —Леонтий Давыдăвич Острйаков йулташа тăратнă. Острйаков йулташ граждăн вăрçин хайар вут-хĕмĕ витĕр тухнă. Вăл Совет влаçĕшĕн Царицăн фронтĕнче, кăнтăрти фронтра, т. ыт. фронтсенче те шурă бандăсене хирĕç алла винтовкă тытса кĕрешнĕ. Граждăн вăрçи фрончĕсенче паттăрăн кĕрешнĕ пекех вăл йала социалисăмла çĕнетес ĕçре пĕтĕм вăйне хурса кĕрешет. 1935 çулта Острйаков йулташ йертсе пыракан бригадă гектартан вăтам шутпа 22-шер центнĕр тĕштырă туса илет. Йалхуçалăхĕнчи паттăр ĕçсемшĕн вăл Ленин орденне илме тивĕçлĕ пулчĕ.

Çĕмĕрле суйлав округĕ тăрăх РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама Алексей Афанасйевич Малинин йулташа—Йетĕрне райĕçтăвком председателне, Улатăр суйлав округĕ тăрăх Александр Васйлйевич Сомăв йулташа—Кувакина райком çекретарне, Çĕрпӳ суйлав округĕ тăрăх Зойа Ананйевна Андрейĕва йулташа—Чăваш АССР Тĕпĕçтăвком председателне, Вăрнар суйлав округĕ тăрăх Иван Васйлйевич Дубăв йулташа—ПСК(б)П Обком çекретарне тăратнă.

Коммуниссемпе партире тăманнисен блокĕ совет халăхĕн пурнăçĕпе йалине кĕрсе вырнаçрĕ. Çак блока 1917 çулти Аслă Октăберĕн штурмăлă кунĕсенче туптаса тунă. Çак блока граждăн вăрçи çулĕсенче халăхăн чи лайăх ывăл-хĕрĕсен йунĕпе хытарса тунă. Çак блок сталинла пилĕк çуллăхсен гигантла ĕçĕсен вут-хĕмĕнче шăрантарса çирĕплетнĕ. Чăваш халăхĕ РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама тăратнă кандидатсем—Сталинла блок, коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсем.

Верховнăй Советсен суйлав кунĕ çывхарса килет. Хале ĕнтĕ пур кандидатсене те регистрацилесе çитерпĕ. Пур çĕрте те суйлав кампани хĕрсе пырать. Агитатăрсен, доверенăйсен суйлавçăсен йышлă массине коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсем çинчен, вĕсен паттăр ĕçĕсем çинчен ăнлантарса парас пулать. Суйлав участкисенче, хапрăк савăтсенче, учрежденисенче, колхозсенче, бригадасенче, суйлавçăсен килĕсенче, хĕрарăмсем, çамрăксем хушшинче агитаци ĕçне тивĕçлĕн йĕркелесе, çитес суйлавра коммуниссемпе партире тăманнисен блокĕ çĕнтермеле тăвас пулать.

Испани компарти Тĕпкомĕн пленумĕ

БАРÇЕЛОНĂ. Майăн 26-мĕш. (ТАСС). Майăн 25-мĕшĕнче Коммуниссен партин Тĕп Комитечĕн Мадридра пулнă пленумĕнче Политбӳро членĕ. Михе тата партин Мадридри провинци комитечĕн çекретарĕ Диегес сăмах тухса каланă. Вĕсем фашисăма хирĕçле пĕрлĕхе çирĕплетме ыйтнă.

Чылайĕшсем тухса калаçнă хыççăн, партин генераљни çекретарĕн Хозе Диасăн çырăвне вуласа панă. Вăл хăйĕн çырăвĕнче партин халăх умĕнчи халљхи вăхăтри ответлăхне кăтартса панă.

Пленум Хозе Диас патне ăна хăвăртрах сывалма сунса саламлă çыру йама йышăннă.

Йулашки ларура Долорес Ибаррури сăмах тухса калана.

***

Зойа Ананйĕвна Андрейĕва йулташа Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама регистрациленĕ

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Мăн-Сĕнтĕрти 7-мĕш номĕрлĕ суйлав округĕнчи суйлав комиççи Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата

Зойа Ананйĕвна Андрейĕвăна

регистрацилесси çинчен йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИ

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидатурăсем тăратни çинчен округри суйлав комиççине килнĕ документсене пăхса тухнă хыççăн, çав документсем „Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали Положенин" 47, 48, 49, 50, 51 тата 52-ш статйисемпе пĕтĕмĕшпех килĕшӳлĕ пулнине палăртса, округри суйлав комиççи çапла йышăнать:

„Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали Положенин" 51-мĕш статйи тăрăх, Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Мăн-Сĕнтĕрти 7-мĕш номĕрлĕ суйлав округĕ тăрăх баллотировкă тума Тутаркас районĕнчи Шомик йалсоветĕнчи „Колос" колхозри колхозниксен пухăвĕ,—вăл пухура 219 çын пулнă,—Чăваш Автономлă Советлă Социалисăмлă Республикĕн Верховнăй советне депутата суйлама тăратнă Чăваш Тĕпĕçтăвкомĕн председателĕн Зойа Ананйĕвна Андрейĕва йулташăн,—1899 çулта çуралнă, ПСК(б)П членĕ, Шупашкар хулинче пурăнать,—кандидатурине регистрацилес.

„Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали Положенин" 56-мĕш статйи тăрăх, Зойа Ананйĕвна Андрейĕва кандидатурине Мăн-Сĕнтĕрти 7-мĕш номĕрлĕ суйлав округĕ тăрăх суйлав бӳллетенне кĕртес.

„Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали Положенин" 55-мĕш статйи тăрăх, çак постановленине пурте пĕлсе тăма пичетлесе кăларас.

Округри суйлав комиççи председателĕ Н. Овчиникăв.
Председателĕн заместителĕ Ф. Константинăва.
Комиççи çекретарĕ Н. Федăрăв.
Комиççи членĕсем: К. Перцĕв, Х. Пакшандайĕв, М. Соловйова, Й. Никитин, А. Гуçĕв.

Округсенчи суйлав комиççийĕсенче

Турхан суйлав округĕ № 81

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен округри суйлав комиççи Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама баллотировкă тума Турхан районĕнчи Бокшайĕври пуçламĕш шкул пуçлăхĕн

Васйлий Çеменăвич Кириллăв йулташ кандидатурине регистрациленĕ.

Кириллăв йулташ кандидатурине Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Турхан районĕнчи „Осоавиахим", „Трактăр", „Октябрь" колхозсенчи колхозниксен суйлав умĕнхи пухăвĕсенче тăратнă.

Вăрнар суйлав округĕ № 46

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен округри суйлав комиççи Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама баллотировкă тума ПСК(б) Партин Чăваш Обком çекретарĕн

Николай Павлăвич Павлăв йулташ кандидатурине регистрациленĕ.

Павлăв йулташ кандидатурине Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Вăрнарти фосфорит савăтĕнчи рабочисемпе служăшчисен, инженерла-техникла работниксен, Сталин тата Крупскайа йачĕпе тăракан колхозсен колхозникĕсен суйлав умĕнхи пухăвĕсенче тăратнă.

Йӳçкасси суйлав округĕ № 28

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен округри суйлав комиççи Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама баллотировкă тума Елĕкри машинă-тракторлă станцинчи тракторис-стаханăвĕц

Мирон Андрейĕвич Андрейĕв йулташ кандидатурине регистрациленĕ.

Андрейĕв йулташ кандидатурине Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Елĕк районĕнчи „Ударник", Комбайн", „Октябрь", „Красное Сормово", „Социализм", „Знамя", тата Иљйич йачĕпе тăракан колхоз колхозникĕсен суйлав умĕнхи пухăвĕсенче тăратнă.

Йелчĕк суйлав округĕ № 75

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен округри суйлав комиççи Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама баллотировкă тума Йелчĕкри туллимар вăтам шкул директăрĕн

Владимир Михайлăвич Немцĕв йулташ кандидатурине регистрациленĕ.

Немцĕв йулташ кандидатурине Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Йелчĕк районĕнчи „Коммунист", Смычка", „Красные Тимяши", „Тимирязево", „Трактор", „Пахарь" тата Ленин, Сталин, Карл Маркс йачĕсемпе тăракан колхоз колхозникĕсен суйлав умĕнхи пухăвĕсенче тăратнă.

Совет халăхĕн кандидачĕсем

Округсĕнчи суйлав комиççисем союзла тата автономлă республикăсен Верховнăй Советне депутата суйлама кандидатурăсем регистрацилеççĕ.

СТАЛИН йулташа тата МОЛĂТАВ йулташа союзлă тата автономлă пур республикăсенче те Верховнăй Совета депутата суйлама кандидата регистрациленĕ. Сталин, Молăтăв, Калинин, Каганович, Ворошилăв, Андрейĕв, Микойан, Чубарь, Жданăв, Йежов йулташсен кандидатурисемшĕн вĕсен кандидатурисене регистрациленĕ округсенчи суйлавçăсем калама çук пысăк хаваслăхпа савăнса саламлама пулаççĕ.

РСФСР

Свердловск хулинчи Свердловски—Кагановически хула суйлав округĕн округри суйлав комиççи Л.М. Каганович йулташ кандидатурине регистрациленĕ.

Сталинград хулинчи трактăр савăт суйлав округĕн суйлав комиççийĕ К. Йе. Ворошилăв йулташ кандидатурине регистрациленĕ.

Новосибирск хулинчи Новосибирски—Октăбĕрски суйлав округĕн округри суйлав комиççи А. А. Андрейĕв йулташ кандидатурине регистрациленĕ.

Дон-çи-Ростăв хулинчи Ростовски—Ленински суйлав округĕн округри суйлав комиççи А. И. Микойан йулташ кандидатурине регистрациленĕ.

Ленинград хулинчи Володарски суйлав округĕнчи суйлав комиççи А. А. Жданăв йулташ кандидатурине регистрациленĕ.

Ленинград хулинчи Петроградски суйлав округĕнчи суйлав комиççи М. М. Литвинăв йулташ кандидатурине регистрациленĕ.

Горьки хулинчи Горьковски—Сталински суйлав округĕнчи суйлав комиççи Н.И. Йежов йулташ кандидатурине регистрациленĕ.

Мускаври РСФСР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен 26 суйлав округĕ пурте депутатсене суйлама кандидатсене регистрацилесе пĕтерпĕ. Регистрациленĕ ытти кандидатурăсем шутĕнче çаксем пур: РСФСР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ Н.А. Булганин, Горбунов йачĕпе тăракан савăтри инженер-орденоносец, Çурçĕр пољусне çĕнсе илес тĕлĕшпе ĕçленĕ експедицире пулнăскер, Д.А. Тимофейĕв, Дзержински йачĕпе тăракан Трехгорнăй хапрăкĕнчи чи лайăх стаханăвкăсенчен пĕри ткачихă Й.В. Масленникăва, „Красный пролетарий" савăт директăрĕ М.В. Челухăв, ССР Союзĕн халăх артистки В.В. Барсăва, архитектăр А.Г. Мордвинăв, медицинă профессăрĕ М.П. Кирейĕв.

Туркмен СС Республикĕ

— Округсенчи суйлав комиççисем Туркмен СС Республикĕн Верховнăй Советне депутата суйлама кандидатсене регистрацилесе пĕтерпĕ. Пурĕ 226 кандидат регистрациленĕ. Ытти кандидатурăсем шутĕнче çаксене регистрациленĕ: Туркменистан К(б)П Тĕпком çекретарĕ Йа. А. Чубин, Туркмен СС Республикĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитет председателĕ Х. Бабайĕв, Туркмен Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ А. Худайбергенăв, Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн командирĕ В. Фарафонтăв, Ашхабад чугунçулĕн техникĕ Н. Иванăва, Кара-Бекауљски МТС-нчи трактăрис Улак-Уде.

Казах СС Республикĕ

Казах СС Республикĕн Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен 300 округри суйлав комиççисем пурте депутатсене суйлама кандидатсене регистрацилесе пĕтерпĕ. Ытти кандидатурăсем шутĕнче çаксене регистрациленĕ: Риддер рудникĕнчи стаханăвла ĕç метăчĕсен инструктăрĕ Б. Хласăв, партин Çурçĕр—Казахстан Обкомĕн иккĕмĕш çекретарĕ Н. Божжанăв, Пушкински МТС-нчи трактăр отрйачĕн бригадирĕ Г. Клевцура, Хĕвеланăç Казахстан облаçĕнчи „Нове—Життя" колхоз дойарки орденоносец Л. Наумăва.

(ТАСС).

Сталин йулташа тата унăн çывăх соратникĕсене: В. М. Молăтăв, М. И. Калинин, Л. М. Каганович, К. Йе. Ворошилăв, Н. И. Йежов, А. И. Микойан, А. А. Андрейĕв, А. А. Жданăв йулташсене автономлă республиксен Верховнăй Совечĕсене депутата суйлама кандидата регистрациленĕ

РСФСР мĕн пур автономлă республикĕсенчи ĕççыннисен суйлав умĕнчи пухусенче пысăк хавхаланупа хăйсен республикĕсен Верховнăй Совечĕсене депутата суйлама пĕрремĕш кандидата партипе правиĕлствă руководителĕсене палăртнă. Округсенчи суйлав комиççисем депутата суйлама кандидата Сталин йулташа тата унăн çывăх соратникĕсене регистрацилеме йышăннă решенисем хытă савăнтарнă.

И. В. Сталин, В. М. Молăтăв йулташсене Карел АССР, Тутар АССР, Атăл çинчи нимĕçсен АССР, Мордва АССР, Чăваш АССР, Удмурт АССР Верховнăй Совечĕсене депутата суйлама кандидата регистрациленĕ.

М. И. Калинин йулташа Тутар АССР, Мордва АССР, Крым АССР Верховнăй Совечĕсене депутата суйлама кандидата регистрациленĕ.

Л. М. Каганович йулташа Тутар АССР, Мордва АССР, Чăваш АССР, Крым АССР Верховнăй Совечĕсене депутата суйлама кандидата регистрациленĕ.

К. Йе. Ворошилăв йулташа Тутар АССР, Башкир АССР, Мордва АССР, Чăваш АССР, Крым АССР Верховнăй Совечĕсене депутата суйлама кандидата регистрациленĕ.

А. И. Микойан йулташа Тутар АССР Башкир АССР, Чăваш АССР, Крым АССР Верховнăй Совечĕсене депутата суйлама кандидата рагистрациленĕ.

А. А. Андрейĕв йулташа Тутар АССР, Мордва АССР, Крым АССР Верховнăй Совечĕсене депутата суйлама кандидата регистрациленĕ.

А. А. Жданăв йулташа Мордва АССР, Крым АССР Верховнăй Совечĕсене депутата суйлама кандидата регистрациленĕ.

Н. И. Йежов йулташа Тутар АССР, Башкир АССР, Мордва АССР, Чăваш АССР, Крым АССР Верховнăй Совечĕсене депутата суйлама кандидата регистрациленĕ.

(ТАСС).

Шемшерти митинг

Халăхсен çулпуçĕ И. В. Сталин тата унăн çывăх соратникĕсем В. М. Молăтăв, К. Йе. Ворошилăв, Л. М. Каганович, А. И. Микойан тата Н. И. Йежов йулташсем Чăваш АССР Верховнăй Советне кандидата суйланма баллотировкăна тăма килĕшӳ пани Чăваш ĕççыннисен хаваслăхне çеклентерсе йачĕ.

Майăн 27-мĕшĕнче Шемшер йалсоветне кĕрекен (Шупашкар р-нĕ) колхозсенчи колхозниксен, учителсен тата пионерсен йалсовет центрĕнче митинг пулнă. Митинга 200 çын ытла пуханнă. Митинг çав тери пысăк хаваслăхпа иртнĕ. Митингра Иампулатăври „Зара" колхоз председателĕ М. Кураков, кӳçĕн вăтам тата вăтам шкулсенче ĕçлекенсен проф.ойузĕнчен М. С. Петрова йулташсем тухса каланă. Колхозниксем И. В. Сталин тата унăн чи çывăх соратникĕсем Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйланма килĕшӳ панишĕн тулли кăмăлпа савăнаççĕ. Митингра пулнисем çак пысăк шанăçа ответлес майпа, суйлав кунĕ тĕлне государствă умĕнчи обйазателствăсене пĕтĕмпех тултарма, вăйлă тырпулшăн, йышлă выљăх-чĕрлĕхшĕн татах та хĕрӳлĕн ĕçлĕме пулчĕç.

К. Н.

ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама регистрациленĕ кандидатсем

Çĕрпӳ хула суйлав округĕ № 33

ЧАССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе çĕлекен округри суйлав комиссийĕ майăн 25-мĕшĕнче пулнă ларăвĕнче ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама баллотировкă тума ПСК(б)П Чăваш Обкомĕн советпа суту-илу пайĕн пуçлăхĕн

Михаил Федăрăвич Терентĕйĕв йулташ кандидатурине регистрациленĕ.

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Терентĕйĕв йулташ кандидатурине Çĕрпӳ районĕнчи „1905-мĕш çул", „Çĕнĕ пурнăç", „Правда", „Ĕмĕт", „Луч", „Херлĕ Октябрь", „Сурла", „Малаттук", „Ударник", „Поженар" колхозри колхозниксен тата чăвашсен аратлă лаша выльăх ĕрчетекен савăтри служащийĕсен пĕрлехи пухăвĕсенче тăратнă.

Шуркасси суйлав округĕ № 54

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе çĕлекен округри суйлав комиççин ларăвĕнче Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама баллотировкă тума Матĕшури пуçламĕш шкул заведуйушчин

Прасковйă Александрăвнă Григорйĕва йулташ кандидатурине регистрациленĕ.

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Григорйĕва йулташ кандидатурине Шăхасан районĕнчи „Заря", „Гигант", „Большевик", „1-е Мая", „Правда", Ворошилăв тата Шмидт йачĕпе тăракан колхозсенчи колхозниксен пĕрлехи пухăвĕсенче тăратнă.

Шупашкар хула суйлав округĕ № 1

Чăваш АССР Верховнăй Совет не суйлас тĕлĕшпе çĕлекен округри суйлав комиççин ларăвĕнче Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама баллотировкă тума ПСК(б)П Шупашкар хула Комитет секретарĕн

Тимофей Аркадйĕвич Ахазăв йулташ кандидатурине регистрациленĕ.

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Ахазăв йулташ кандидатурине Çыхăну сурттĕнче тата кирпĕч савăтĕнче çĕлекен рабочисен, работницăсен, инженерсемпе техниксен, служащисен пĕрлехи пухăвĕсенче тăратнă.

Хутар суйлав округĕ № 45

ЧАССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе çĕлекен округри суйлав комиççин ларăвĕнче Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама баллотировкă тума Чăваш республикĕнчи партколлегн секретарĕн

Васçлий Михайлăвич Шишкин йулташ кандидатурине регистрациленĕ.

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлама Шишкин йулташ кандидатурине Çĕмерле районĕнчи „Молодая сила", Ленин йачĕпе тăракан колхозсенчи колхозниксен пĕрлехи пухăвĕсенче тăратнă.

Йăвăспӳрт суйлав округĕ № 53

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе çĕлекен округри суйлав комиççин ларăвĕнче Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама баллотировкă тума Шăхасанти машинăпа трактăр станци директăрĕн

Борис Илларионăвич Йенисейĕв йулташ кандидатурине регистрациленĕ.

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Йенисейĕв йулташ кандидатурине Шăхасан районĕнчи „Канаш", „Победа", Ленин йачĕпе тăракан колхозсенчи колхозниксен пĕрлехи пухăвĕсенче тăратнă.

Урабăш суйлав округĕ № 47

ЧАССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе çĕлекен округри суйлав комиççин ларăвĕнче Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама баллотировкă тума Вăрнарти машинăпа трактăр станцинчи хĕрарăмсен трактăр бригадин бригадирĕн

Йефросинийă Харитонăвна Харитонăвă йулташ кандидатурине регистрациленĕ.

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Харитонăвă йулташ кандидатурине Вăрнар районĕнчи „Майăн 1-мĕш", Чапайĕв йачĕпе тăракан колхозсенчи колхозниксен пĕрлехи пухăвĕсенче тăратнă.

Йăмаш суйлав округĕ № 52

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе çĕлекен округри суйлав комиççин ларăвĕнче Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама баллотировкă тума Шăхасан районĕнчи Уйкас Кипек йалсовет председателĕн

Андрей Иванăвич Иванов йулташ кандидатурине регистрациленĕ.

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Иванов йулташ кандидатурине „Оборона", „Красный луч", „Красный трактор", „Красноармеец", „Новая жизнь", „Свет", Горький тата Куйбышев йачĕсемпе тăракан колхозсенчи колхозниксен пĕрлехи пухăвĕсенче тăратнă.

Карач суйлав округĕ № 41

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе çĕлекен округри суйлав комиççин ларăвĕнче Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама баллотировкă тума Куславкка райĕçтăвком председателĕн

Кирилл Димитрийĕвич Мелйанин йулташ кандидатурине регистрациленĕ.

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Мелйанин йулташ кандидатурине Куславкка районĕнчи Кирăв, Калинин, Каганович йачĕпе тăракан колхозсенчи колхозниксен пĕрлехи пухăвĕсенче тăратнă.

Шурча суйлав округĕ № 12

ЧАССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе çĕлекен округри суйлав комиççийĕ майăн 26-мĕшĕнче пулнă ларура ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама баллотировкă тума ПСК(б)П Ишлей райком секретарĕн

Григорий Иванăвич Тепейĕв йулташ кандидатурине регистрациленĕ.

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Тепейĕв йулташ кандидатурине Ишлей районĕнчи Мăн-Мамăш йалĕнчи Буденнăй йачĕпе тăракан колхоз членĕсен, служащисен тата йединоличниксен пĕрлехи пухăвĕнче тăратнă.

Ишлей-Покровски суйлав округĕ № 11

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе çĕлекен округри суйлав комиççийĕ майăн 26-мĕшĕнче пулнă ларура Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама баллотировка тума Ишлей МТСтанцинчи стахановка-трактористка

Анисйа Исайĕвнă Изыкăвă йулташ кандидатурине регистрациленĕ.

Изыкăвă йулташ кандидатурине Ишлей районĕнчи „Париж Коммуни" колхоз колхозникĕсен пĕрлехи пухăвĕнче тăратнă.

Тулик Хураски суйлав округĕ № 6

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе çĕлекен округри суйлав комиççийĕ майăн 26-мĕшĕнче пулнă ларура Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама баллотировкă тума Шупашкар райĕçтăвком председателĕн

Николай Çеменăвич Хабарăв йулташ кандидатурине регистрациленĕ.


Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Хабарăв йулташ кандидатурине Шупашкар районĕнчи „Шордан" тата Карл Маркс йачĕпе тăракан колхозсенчи колхозниксен пĕрлехи пухăвĕсенче тăратнă.

Шупашкар суйлав округĕ № 3

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе çĕлекен округри суйлав комиççийĕ майăн 26-мĕшĕнче пулнă ларура Чăваш-АССР Верховнăй Советне депутата суйлама баллотировка тума Чăвашри педагогика институчĕн директăрĕн

Варфоломей Тихăнăвич Харитонăв йулташ кандидатурине регистрациленĕ.

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Харитонăв йулташ кандидатурине Шупашкарти „Автоременот" савăтĕнчи тата Полиграфтрестăн 1-мĕш номерлĕ типографийĕнчи рабочисен пĕрлехи пухăвĕсенче тăратнă.



ЧАССР Шалти ĕçсен Халăх Комиссарĕ Алексей Михайлăвич Розанăв. Ăна Пантăк суйлав округĕнчи суйлав комиççи ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата регистрациленĕ.

Пантăк суйлав округĕ № 23

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе çĕлекен округри суйлав комиççийĕ майăн 26 мĕшĕнче пулнă ларура Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама баллотировкă тума Чăваш АССР Шалти ĕçсен Халăх Комиссарĕн

Алексей Михайлăвич Розанăв йулташ кандидатурине регистрациленĕ.

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Розанăв йулташ кандидатурине „Çĕнĕ пурнăç", „Херлĕ Çалтăр", „Çĕнĕ çул" тата Молотăв йачĕпе тăракан колхозсенчи колхозниксен суйлав умĕнхи пĕрлехи пухăвĕсенче тăратнă.

Куславкка суйлав округĕ № 38

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе çĕлекен округри суйлав комиççи Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама баллотировка тума Куславкка комбинатĕнчи работница-стахановка

Александра Александрăвнă Фирсăвă йулташ кандидатурине регистрациленĕ.

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Фирсăвă йулташ кандидатурине Куславкка комбинатĕнчи рабочисен, служащисен тата инженерла-техникла работниксен, Куславкка районĕнчи Комаровски колхоз членĕсен пĕрлехи пухăвĕсенче тăратнă.

Çĕмĕрле хула суйлав округĕ № 42

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе çĕлекен Çĕмĕрле хула суйлав округ комиççийĕ Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама баллотировка тума Çĕмĕрлери йăвăç каскала-кан комбинатри работница-стахановкă

Верă Касйанăвнă Касйанăвă йулташ кандидатурине регистрациленĕ.

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Касйанăвă йулташ кандидатурине Çĕмĕрлери йăвăç каскалакан комбинатри тата „Большевик" савăтри рабочисен, служащисен тата инженерла-техникла работниксен пĕрлехи пухăвĕсенче тăратнă.

Сиккасси суйлав округĕ № 58

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе çĕлекен округри суйлав комиççи Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама баллотировкă тума ПСК(б)П Канаш райком секретарĕн

Павел Ананйĕвич Белоруссăв йулташ кандидатурине регистрациленĕ.

Белоруссăв йулташ кандидатурине Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама „Новая жизнь", Сталин тата Шмидт йачĕпе тăракан колхоз колхозникĕсен суйлав умĕнхи пухăвĕсенче тăратнă.

Тайăпа суйлав округĕ № 77

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе çĕлекен округри суйлав комиççийĕ майăн 26 мĕшĕнче пулнă ларура Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама баллотировкă тума Йĕлчĕк районĕнчи Вăрăм хăва (Ново Тойдеряково) йалсовет председателĕ

Феодосийă Йакăвлĕвнă Çмирновă йулташ кандидатурине регистрациленĕ.

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Çмирновă йулташ кандидатурине Йĕлчĕк районĕнчи „Хунав", „МОПР", „КИМ", Чапайĕв йачĕпе тăракан, „Комсомолец", Ворошилăв йачĕпе тăракан, Пушкин йачĕпе тăракан, „Херлĕ Партизан", „Комбайн", „Иккĕмĕш пятилетка", „Молот" тата Крупская йачĕпе тăракан колхозсенчи колхозниксен пĕрлехи пухăвĕсенче (пĕрле илсен пухура 1557 çын пулнă) тăратнă.

Стемас суйлав округĕ № 92

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе çĕлекен округри суйлав комиççи хăйĕн ларăвĕнче Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама баллотировка тума Улатăр районĕнчи „Путь Ильича" колхоз колхозницине

Йевдокийă Федăрăвнă Грабăвă йулташ кандидатурине регистрациленĕ.

Грабăвă йулташ кандидатурине Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Улатăр районĕнчи „Путь Ильича", „Победа Октября", „Красный луч", „Победа", „Удельная" колхоз колхозникĕсен тата Засурски, Безнински совхозĕсемпе махорка совхозĕнчи рабочисемпе служащисен суйлав умĕнхи пухăвĕсенче тăратнă. Вăл пухусенче 1467 çын пулнă.

Канаш савăт суйлав округĕ № 56

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе çĕлекен округри суйлав комиççи Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама баллотировкă тума Канашри вакунсем йусакан савăтри тимерçĕсен цехĕн начальникĕн

Консантин Тимофейĕвич Назарăв йулташ кандидатурине регистрациленĕ.

Назарăв йулташ кандидатурине Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Канашри вакунсем йусакан савăтри, чукунçул транспортĕнчи, сĕтел-пукансем тăвакан тата хапрăкри рабочисемпе служащисен тата инженерла-техникла работниксен, Канашри финанспа экономика техникумĕнчи преподавательсемпе студентсен суйлав умĕнхи пухăвĕсенче тăратнă.

Катек суйлав округĕ № 59

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе çĕлекен округри суйлав комиççи Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама баллотировкă тума чăвашсен государствă академи театрĕн директăрĕн

Константин Иванăвич Иванов йулташ кандидатурине регистрациленĕ.

Иванов йулташ кандидатурине Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Канаш районĕнчи „Комсомол", „Коммунар" тата Каганович йачĕпе тăракан колхоз колхозникĕсен суйлав умĕнхи пухăвĕсенче тăратнă.

Патăрйел суйлав округĕ № 84

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе çĕлекен округри суйлав комиççи Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама баллотировкă тума Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕн заместителĕн

Филипп Алексейĕвич Матвейĕв йулташ кандидатурине регистрациленĕ.

Матвейĕв йулташ кандидатурине Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Патăрйел районĕнчи „Знамя октября", „Путь Ленина" тата Роза Люксембург йачĕпе тăракан колхоз колхозникĕсем суйлав умĕнхи пухусенче тăратнă.

Пăрачкав суйлав округĕ № 67

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе çĕлекен округри суйлав комиççи хăйĕн ларăвĕнче Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама баллотировкă тума Рабочисемпе Хресченсен Милици Управлени начальникĕн

Николай Николайĕвич Дренйасăв йулташ кандидатурине регистрациленĕ.

Дренйасăв йулташ кандидатурине Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Пăрачкав районĕнчи Максим Горьки йачĕпе тăракан колхоз колхозникĕсен суйлав умĕнхи пухăвĕсенче тăратнă.

Шăнкăртам суйлав округĕ № 87

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе çĕлекен округри суйлав комиççи Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама баллотировкă тума Шăнкăртам райĕçтăвком председателĕн

Фазкля Сафиулович Сафиулин йулташ кандидатурине регистрациленĕ.

Сафиулин йулташ кандидатурине Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Шăнкăртам районĕнчи „Сталь", „Кызыл Юл" колхоз колхозникĕсен суйлав умĕнхи пухăвĕсенче тăратнă.

Турай суйлав округĕ № 10

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе çĕлекен округри суйлав комиççи хăйĕн ларăвĕнче Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама баллотировкă тума Тутаркас районĕнчи „Страж революции" колхоз председателĕн

Васçлий Данилăвич Данилăв йулташ кандидатурине регистрациленĕ.

Данилăв йулташ кандидатурине Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Тутаркас районĕнчи „Страж революции" колхоз колхозникĕсен суйлав умĕнхи пухăвĕнче тăратнă.

Алтышевă суйлав округĕ № 94

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе çĕлекен округри суйлав комиççи Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама баллотировкă тума Апаçимĕç Халăх Комиссариачĕн уполномоченнăйĕн, ПСК(б)П членĕн

Филипп Çтепанăвич Çтепанăв йулташ кандидатурине регистрациленĕ.

Çтепанăв йулташ кандидатурине Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Улатăр районĕнчи 5-мĕш номерлĕ хăма сулакан савăтри рабочисен, служащисен, инженерла-техникла работниксен тата „Заря", „Правда", „Трудовик", „Майăн 1-мĕш" колхоз колхозникĕсен суйлав умĕнхи пухăвĕсенче тăратнă.

Йункă суйлав округĕ № 9

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе çĕлекен округри суйлав комиççи Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама баллотировкă тума Пушкарт йалсовет председателĕн

Михаил Çеменович Кйазĕв йулташ кандидатурине регистрациленĕ.

Кйазĕв йулташ кандидатурине Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Тутаркас районĕнчи „Новый путь" колхоз колхозникĕсен суйлав умĕнхи пухăвĕнче тăратнă.

Урмайел суйлав округĕ № 88

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе çĕлекен округри суйлав комиççи хăйĕн ларăвĕнче Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Тукай йалсовет председателĕн

Зарифулла Галиулăвич Галиулин йулташ кандидатурине регистрациленĕ.

Галиулин йулташ кандидатурине Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Шăнкăртам районĕнчи „Августăн 1-мĕшĕ", „Кызыл Юлдус" колхоз колхозникĕсен суйлав умĕнхи пухăвĕнче тăратнă.

Рйапинă суйлав округĕ № 70

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе çĕлекен округри суйлав комиççи хăйĕн ларăвĕнче Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама баллотировкă тума Лобачейскăри пуçламĕш шкулти учительницăна

Прасковйă Иванăвнă Новикăвă йулташ кандидатурине регистрациленĕ.

Новикăвă йулташ кандидатурине Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Пăрачкав районĕнчи „Победа" колхоз колхозникĕсен суйлав умĕнхи пухăвĕнче тăратнă.

Хапăс суйлав округĕ № 50

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе çĕлекен округри суйлав комиççийĕ Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама баллотировкă тума Вăрнар райĕçтăвком председателĕн

Григорий Михайлăвич Гусĕв йулташ кандидатурине регистрациленĕ.

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Гусĕв йулташ кандидатурине Вăрнар районĕнчи „Советская деревня", „Трактăр", „Самоход" колхозсенчи колхозниксен пĕрлехи пухăвĕсенче тăратнă.

Хĕрлĕ Чутай суйлав округĕ № 22

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе çĕлекен округри суйлав комиççийĕ майăн 26-мĕшĕнче пулнă ларура Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама баллотировкă тума

Лйубовь Çеменăвнă Полйакова йулташ кандидатурине регистрациленĕ.

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Полйакова йулташ кандидатурине Херлĕ Чутай районĕнчи „Агроном", „Херлĕ Сурăм" тата Ворошилăв йачĕпе тăракан колхозсенчи колхозниксен пĕрлехи пухăвĕсенче (пурĕ 482 çын пулнă) тăратнă.

Çеменăвски суйлав округĕ № 68

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе çĕлекен округри суйлав комиççийĕ майăн 26-мĕшĕнче пулнă ларура Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама баллотировкă тума

Александр Çтепанăвич Родионăв йулташ кандидатурине регистрациленĕ.

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Родионăв йулташ кандидатурине Пăрачкав районĕнчи „Большевик", Карл Маркс тата Кирăв йачĕпе тăракан колхозсенчи колхозниксен пĕрлехи пухăвĕсенче тăратнă.

(Малалли 3-мĕш страницăра).

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама регистрациленĕ кандидатсем

Карăклă суйлав округĕ № 57

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен округри суйлав комиссийĕ Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама баллотировкă тума Чăваш АССР Суту-илӳ Халăх Комиссарĕн

Кирилл Куçмич Вастрӳк

йулташ кандидатурине регистрациленĕ.

Вастрӳк йулташ кандидатурине Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Канаш районĕнчи „Броневик“, „Красное пламя“ колхоз колхозникĕсен суйлав умĕнхи пухăвĕсенче тăратнă.

Елкеш суйлав округĕ № 43

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен округри суйлав комиссийĕ майăн 26-мĕшĕнче пулнă ларура Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама баллотировкă тума „Красноармеец“ колхозри колхозницă-орденоноскă

Анисийă Çеменăвнă Чекменевă

йулташ кандидатурине регистрациленĕ.

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлама Чекменевă йулташ кандидатурине „Труженник“ тата Мыслецри хăма çуракан савăтри рабочисен, служăщчисен, инженерла-техникла работникĕсен тата „Красноармеец“, „Подборная“, „Хĕрлĕ Октябĕр“, „Ударник“ колхозсенчи колхозниксен пĕрлехи пухăвĕсенче тăратнă.

Нурăс суйлав округĕ № 49

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен округри суйлав комиссийĕ Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама баллотировкă тума Вăрнар районĕнчи Йĕрмошкинă йалсовет председательне

Йефимийă Борисăвнă Виноградăвă

йулташ кандидатурине регистрациленĕ.

Виноградăвă йулташ кандидатурине Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Вăрнар районĕнчи „Путь Ленина“ тата Пушкин йачĕпе тăракан колхоз колхозникĕсен суйлав умĕнхи пухăвĕсенче тăратнă.

Хурамал суйлав округĕ № 72

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен округри суйлав комиссийĕ Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама баллотировкă тума Йĕпреç ри Çар Комиссариатĕнчи çар комиссарне

Иван Николайĕвич Бурков

йулташ кандидатурине регистрациленĕ.

Бурков йулташ кандидатурине Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Йĕпреç районĕнчи „Большевик“, „Красный водник“ колхоз колхозникĕсен суйлав пухăвĕсенче тăратнă.

Хирти Сĕнтĕр суйлав округĕ № 85

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен округри суйлав комиссийĕ Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама баллотировкă тума Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕн заместителĕн

Вадим Петрович Чернов

йулташ кандидатурине регистрациленĕ.

Чернов йулташ кандидатурине Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Патăрйел районĕнчи „Красный Октябрь“, „Сормово“, „Культура“, „Искра“, Шмидт тата Буденный йачĕпе тăракан колхоз колхозникĕсен суйлав умĕнхи пухăвĕсенче тăратнă. Вăл пухусенче 946 çын пулнă.

Ĕсмĕл суйлав округĕ № 16

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен округри суйлав комиссийĕ Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама баллотировкă тума Кив Тутайкасси йалсовет председателĕн

Артемий Иванăвич Иванов

йулташ кандидатурине регистрациленĕ.

Иванов йулташ Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Сĕнтĕрвăрри районĕнчи „Сталь“, „Ударник“, „Кунер“ колхозсен колхозникĕсен суйлав умĕнхи пухăвĕсенче тăратнă.

Хучаш суйлав округĕ № 20

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен округри суйлав комиссийĕ Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама баллотировкă тума ПСК(б) Парти Чăваш Обкомĕн йĕртсе пыракан парторганĕсен пайĕ пуçлăхĕн

Петр Çтепанăвич Полтийĕв

йулташ кандидатурине регистрациленĕ

Полтийĕв йулташ кандидатурине Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Йĕтĕрне районĕнчи „Новый путь“, „Красное Хочашево“, „Крестьянская газета“, „Новый быт“ тата Горьки йачĕпе тăракан колхоз колхозникĕсен суйлав умĕнчи пухăвĕсенче тăратнă.

Карай суйлав округĕ № 31

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен округри суйлав комиссийĕ Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама баллотировкă тума Трак районĕнчи „Йанмурзино“ колхоз председателĕн, ПСÇЛКС членĕн

Петр Йефремăвич Йефремăв

йулташ кандидатурине регистрациленĕ.

Йефремăв йулташ кандидатурине Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Трак районĕнчи „Йанмурзино“, „Красная звезда“ колхозсенчи колхозниксен суйлав умĕнхи пухăвĕсенче тăратнă.

Наратчакки суйлав округĕ № 15

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен округри суйлав комиссийĕ Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама баллотировкă тума ПСК(б)П Чăваш Обкомĕн советпа суту-илӳ пайĕн инструкторĕн

Йевгени Иванăвич Одинцов

йулташ кандидатурине регистрациленĕ.

Одинцов йулташ кандидатурине Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Сĕнтĕрвăрри районĕнчи „Красный Волгарь“, „Культура“ тата Буденнай йачĕпе тăракан колхоз колхозникĕсен суйлав умĕнхи пухăвĕсенче тăратнă.

Шĕмшеш суйлав округĕ № 29

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен округри суйлав комиссийĕ Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама баллотировкă тума Хатĕрлев Халăх Комиссарĕн Чăваш республикĕнчи уполномоченнăйĕн

Димитри Йакăвлĕвич Митков

йулташ кандидатурине регистрациленĕ.

Митков йулташ кандидатурине Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Елĕк районĕнчи сĕт-кантăр савăтĕнчи рабочисен тата „Новая победа“, „Паровоз“, Ленин йачĕпе тăракан колхоз колхозникĕсен суйлав умĕнхи пухăвĕсенче тăратнă.

Вутлан суйлав округĕ № 26

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен округри суйлав комиссийĕ Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама баллотировкă тума Елĕк райĕçтăвком председателĕн заместителĕн, орденоносец

Тимофей Порфирийĕвич Куликов

йулташ кандидатурине регистрациленĕ.

Куликов йулташ кандидатурине Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Елĕк районĕнчи „Доброволец“ тата Молăтăв йачĕпе тăракан колхозсен колхозникĕсен суйлав умĕнхи пухăвĕсенче тăратнă.

Кăмаш суйлав округĕ № 44

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен округри суйлав комиссийĕ Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама баллотировкă тума Çĕмĕрле райĕçтăвком председателĕн

Петр Матвейĕвич Матвейĕв

йулташ кандидатурине регистрациленĕ.

Матвейĕв йулташ кандидатурине Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Çĕмĕрле р-чи „Большевик“, „Волга“ колхоз колхозникĕсен суйлав умĕнхи пухăвĕсенче тăратнă.

Патша Российĕнчи револуцилĕ йухăмăн паллă деятелĕ, вăтă большевик Николай Ернестович Бауман çурални майăн 29-мĕшĕнче 65 çул тултарать.
ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Николай Ернестович Бауман (1973—1905).
(Сойузфото репродукцийĕ)

Тĕрлемес суйлав округĕ № 40

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен округри суйлав комиссийĕ Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама баллотировкă тума ПСК(б)П Чăваш Обкомĕн промышленнăçпа транспăрт пайĕн пуçлăхĕн

Александр Иванăвич Пожеданăв

йулташ кандидатурине регистрациленĕ.

Пожеданăв йулташ кандидатурине Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Куславкка районĕнчи „Коммунар“ тата Карл Маркс йачĕпе тăракан колхозсен колхозникĕсен суйлав умĕнхи пухăвĕсенче тăратнă.

Чупай суйлав округĕ № 61

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен округри суйлав комиссийĕ Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама баллотировкă тума Вăрнарти „Спортинвентарь“ хапрăкĕнчи работницă стахановкăн

Марийă Федăрăвнă Федăрăвă

йулташ кандидатурине регистрациленĕ.

Федăрăвă йулташ кандидатурине Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Вăрмар районĕнчи „Спортинвентарь“ хапрăкĕнчи рабочисемпе служăщчисен тата „Сталь“, „Ударник“ колхозсенчи колхозниксен суйлав умĕнхи пухăвĕсенче тăратнă.

Пашйел суйлав округĕ № 96

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен округри суйлав комиссийĕ Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама баллотировкă тума Шăмăршă районĕнчи „Йулташ“ колхозри колхозницăн

Варварă Игнатийĕвнă Журавльовă

йулташ кандидатурине регистрациленĕ.

Журавльовă йулташ кандидатурине Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Шăмăршă районĕнчи „Красная Нива“, „Заря“, „Свобода“, „Красный пахарь“ тата Космовски йачĕпе тăракан колхозсенчи колхозниксен суйлав умĕнхи пухăвĕсенче тăратнă.

Сĕнтĕрвăрри хула суйлав округĕ № 14

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен округри суйлав комиссийĕ Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама баллотировкă тума Чăваш АССР Госплан председателĕн

Михаил Андрейĕвич Андрейĕв

йулташ кандидатурине регистрациленĕ.

Андрейĕв йулташ кандидатурине Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Сĕнтĕрвăрри хулинчи судоверфри, спирт савăтĕнчи рабочисемпе служăщчисен инженерла-техникла работникĕсен тата „Красный Волгарь“ промысла-кооперации ертелĕн членĕсен суйлав умĕнхи пухăвĕсенче тăратнă.

Кирăвский хула суйлав округĕ № 91

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен округри суйлав комиссийĕ Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама баллотировкă тума ПСК(б) Партин Улатăр райком çекретарĕн

Александр Павлăвич Йерофейĕв

йулташ кандидатурине регистрациленĕ.

Иерофейĕв йулташ кандидатурине Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Улатăрти кирпĕч савăтĕнчи, 8-мĕш номĕрлĕ хăма çуракан савăтри, Мелькомбинатри, Заготзернори рабочисемпе служăщчисем, инженерла-техникла работниксем тата Сталин йачĕпе тăракан колхоз колхозникĕсен суйлав умĕнхи пухăвĕсенче тăратнă.

Тимĕрçкасси суйлав округĕ № 74

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен округри суйлав комиссийĕ Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама баллотировкă тума Йĕпреçри сланц рудникĕнчи подйомнăй машинă çинче ĕçлекен маçтăр

Натали Филиппăвнă Зотăвă

йулташ кандидатурине регистрациленĕ.

Зотăвă йулташ кандидатурине Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Йĕпреç районĕнчи „Мурат“, Литвинăв, Чапайев йачĕпе тăракан колхоз членĕсен суйлав умĕнхи пухăвĕсенче тăратнă.

Кӳкеç суйлав округĕ № 4

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен округри суйлав комиссийĕ Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама баллотировкă тума ПСК(б)Парти Чăваш Обком çекретарĕн

Иван Васийĕвич Дубăв

йулташ кандидатурине регистрациленĕ.

Дубăв йулташ кандидатурине Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Шупашкар районĕнчи „Майăн 1-мĕш“ колхоз колхозникĕсен суйлав умĕнхи пухăвĕнче тăратнă.

Аслă Арапуç суйлав округĕ № 82

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен округри суйлав комиссийĕ Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама баллотировкă тума ПСК(б) Партин Турхан райком çекретарĕн

Дмитрий Андрейĕвич Андрейĕв

йулташ кандидатурине регистрациленĕ.

Андрейĕв йулташ кандидатурине Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Турхан районĕнчи Аслă Арапуçĕнчи ахмалпа пăткă тăвакан хапрăкри рабочисемпе служăщчисен, инженерла-техникла работниксен тата „Красное Именево“, Молăтăв йачĕпе тăракан колхоз колхозникĕсен суйлав умĕнхи пухăвĕсенче тăратнă.

Коммуниссемпе партире тăманнисен блокĕн кандидачĕсемшĕн сасăлатпăр

Суйлавçăсен митингĕсенче

И. В. Сталин тата унăн чи çывăх соратникĕсем Молăтăв, Ворошилăв, Каганович, Йежов тата Микойан йулташсем Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйланма баллотировкăна тăма килĕшӳ панă май, майăн 26-мĕшĕнче Куславкка комбинатĕнче рабочисен, работницăсен, инженерла-техникла работниксен, служăщчисен тата килхуçи хĕрарăмĕсен митингĕ пулса иртрĕ. Митингра 300 çын патне пулчĕ.

Комбинатри стахановкă, ССР Сойузĕн Верховнăй Совет депутачĕ Цыгановă йулташ митингра тухса çапла каларĕ:

— Парти Тĕпкомĕн Политбюро членĕсем Сталин, Молăтăв, Ворошилăв, Каганович, Йежов тата Микойан йулташсем ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйланма баллотировкăна тăма килĕшӳ панине илтнĕ хыççăнхи хамăн хавасса каласа та пама пултараймастăп. Çакă пире хамăрăн ĕçе тата лайăхрах организацилеме, çитменлĕхсене пĕтерме, производствăлă программăна ытлашшипех тултарма хушать. Пирĕн, рабочисемпе работницăсен, инженерла-техникла работниксен, стахановецсемпе стахановкăсен стахановла йухăма анлăн сарса пымала, коммуниссен парти, халăхсен çулпуçĕ Сталин йулташ тавра лайăхрах пĕтĕçмеле.

Сывă пултăр çулпуç Сталин йулташ!

Комбинатри рабочисен, инженерла-техникла работниксен, служăщчисен тата килхуçи хĕрарăмĕсен митингĕ йышăннă РЕЗОЛЮЦИ

Епĕр, рабочисемпе работницăсем, инженерла-техникла работниксем, служăщчисем, килхуçи хĕрарăмĕсем халăхсен çулпуçĕ Сталин тата унăн çывăх соратникĕсем Молăтăв, Ворошилăв, Каганович, Йежов тата Микойан йулташсем ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйланма баллотировкăна тăма килĕшӳ пани çинчен пĕлтернине пысăк хавасланăхпа итлерĕмĕр.

Епĕр хамăр ĕçре сыхăлăхлă пулма, социалисăмла пурлăха вичкĕн сыхлама пулатпăр. Суйлав кунне—ийунĕн 26-мĕшне стахановла йухăма тата ударлă ĕçлессине сарса пынипе производствăлă программăна ытлашшипех тата пысăк пахалăхпа тултарнипе кĕтсе илме пулатпăр.

Сывă пултăр коммуниссен большевиксен партийĕ!

Сывă пултăр Сталин йулташ!

Сывă пулччăр Парти Тĕпкомĕн Политбюро членĕсем Молăтăв, Ворошилăв, Каганович, Йежов тата Микойан йулташсем!

Куславкка районĕнчи „Большевик“ колхоз членĕсен майăн 27-мĕшĕнче пулса иртнĕ пĕрлехи пухăвĕ йышăннă РЕЗОЛЮЦИ

ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйланма аслă çулпуç Сталин йулташ та унăн соратникĕсем Молăтăв, Ворошилăв, Каганович, Йежов, Микойан йулташсем баллотировкăна тăма килĕшӳ пани çинчен пĕлтернине итленĕ хыççăн, епĕр, „Большевик“ колхозри колхозниксем, Сталин, Молăтăв, Ворошилăв, Каганович, Йежов тата Микойан йулташсем Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйланма баллотировкăна тăма килĕшӳ панипе хĕрӳлĕн савăнатпăр. Епĕр вĕсен кандидатурисемшĕн пĕр шухăшлă пулса тăратпăр, Чăваш республикĕнчи суйлавçăсене пурне те суйлав кунĕнче—ийунĕн 26-мĕшĕнче хăйсен сассисене аслă Сталин, Молăтăв, Ворошилăв, Каганович, Йежов тата Микойан йулташсемшĕн пама чĕнетпĕр.

Куппа пĕрлех епĕр Куславкка суйлав округĕнчи суйлавçăсене пурне те майăн 26 мĕшĕнче хамăр ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата палартнă Александра Александрăвна Фигсăвă йулташăн хăйсен сассисене пама чĕнетпĕр.

Епĕр, „Большевик“ колхоз колхозникĕсем, РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлав кунне—ийунĕн 26 мĕшне çитĕнӳсемпе, государствă умĕнчи обязательствăсене парса татнипе кĕтсе илме пулатпăр.

Сывă пултăр коммуниссен партийĕ!

Сывă пулччăр Сталин тата унăн соратникĕсем Молăтăв, Ворошилăв, Каганович, Йежов тата Микойан йулташсем!

„Тăван çĕршывăн тивĕçлĕ ывăлĕн йатне çухатмăп“

ШĂХАСАН, майăн 27-мĕш (хамăр корр.). Плошчĕ пасара кил ĕçыннисемпе тулнă. 10 сехет иртсен парти райкомĕн пĕррĕмĕш çекретарĕ Никитин йулташ Шăхасан районĕнчи ĕççыннисен митингне уçрĕ.

— Пирĕн чăваш ĕççыннисем хавасла хыпар илчĕç. Партипе правительствăн туратнă çулпуçĕсем И. В. Сталин, Молăтăв, Ворошилăв, Каганович, Микойан, Йежов йулташсем пирĕн Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйланма килĕшрĕç,—терĕ вăл.

Унтан райкомăн иккĕмĕш çекретарĕ Ашмарин йулташ тухрĕ. Районри ĕççыннисем ЧАССР Верховнăй Советне суйлама тăратнă А. И. Иванов, П. А. Григорйевă, Б. И. Йениçейĕв, М. М. Михайлăв йулташсен кандидатурисене регистрацилени çинчен чăрăнса тарса, вĕсемшĕн сасăлама чĕнсе каларĕ. Митингра комсомол райкомĕнчен Михайлăв, йал хуçалăх специалисчĕсенчен агроном Метилăв йулташсем тухса каларĕç. Трибуна çинче Авăспӳрт суйлав округĕнче ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама регистрациленĕ кандидат Б. И. Йениçейĕв йулташ. Вăл малтанах „Канаш“, „Память Ильича“ колхоз колхозникĕсене МТС тракторисĕсене хăйне шанса пысăк чыса хунăшăн тав турĕ.

— Епĕ,—тет вăл,—ман çине хунă шанчăклăха ĕçпе пурнăçлăп, тăван çĕршывăн тивĕçлĕ ывăлĕ йатне çухатмăп,— тет.

Çавăн пекех Шăхасан суйлав округĕнче депутата суйлама регистрациленĕ М. М. Михайлăв йулташ та хăйне шанса пысăк чыса хурса кĕртнĕшĕн чĕререн тав турĕ, халăх шанчăклăхне ĕçпе пурнăçлама пулни çинчен шантарчĕ.

Митинг РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕсене çĕнтерӳлĕн кĕтсе илсе, коммуниссемпе парти тăманнисен Сталинла блокĕн кандидачĕсемшĕн сасăлама хатĕррине кăтартса резолюци йышăнчĕ.

В. Чернов.

Довереннăй

ТĂВАЙ (Хамăр корр.). Тушкилтри „Хĕрлĕ çар“ колхоз членĕ, 55 çулхи Илларион Федотăв йулташ, Тушкилтри суйлав участкинче довереннăй пулса ĕçлет. Сталин саманинче кăна çынсен шутне кĕнине Федотăв йулташ чĕрепех туйать.

— Аллă пилĕк çула çитрĕм, хальхин пек кăмăлăм çĕкленмен. Ĕлекхи йытă пурнăçа аса илсессĕн, к çамсем ирĕксĕрех шывланаççĕ. Вуниккĕн икĕ йатак çĕрпе пурнаттăмăр. Çур хĕле çитсессĕн çимели пĕтетчĕ. Вăра кĕркунне акса хăварнă ыраш калчисенчен пĕр çурмапилĕкне сутса пуйансене парăма кĕр ттĕмĕрччĕ.

Социали ăмла революци кусăмсене уçрĕ. Колхоза кĕнĕрен вăра телейĕме тинех тупрăм. Ликпунта кайса унта вулама, çырма тата шутлама лайăхах вĕрен тĕм. Акă хальмана пигĕ ответлă ĕç шанса панă.

Çапла вара Федотăв йулташ колхоза кĕрсен пуйан пурнăç çулĕ çине тăнипе пĕрлех, пелӳлĕхне те ӳстерне.

Федотăвăн 5 ача. Вĕсем çине пăхса вăл савăнать, мухтанать. Хăй ачисене социалисăм строительствине вальли йурăхлă çынсем тăвасшăн тăрăшать.

Аслă хĕрачи Марийа Шупашкарти пропагандиссен курсĕнче, Гриша—Тушкилтри туллимар вăтам шкулта 7 ш. класра, Аннă 6-ш класра, Алексей 4-ш класра отличнă та хорошо паллăсемпе вĕренеççĕ.

Вĕсенчен кĕçĕнни Çтепан йатлă. 6 çулта кăна-ха. Шкула кайма çул çитмен пулин те, вăл „Букварь“ лайăхах вулать. Унăн ĕмĕчĕ пысăк.

— Кама вĕренсе тухас килет-ха санăн?

— Епĕ шыв çинче çӳрекен капитан пулатăп, тет вăл.

Федотăв умĕнче кăкăр тулли савăнăç. Вăл пы ак шанчăк илнĕ çын, довереннăй. ССР Сойузĕн Верховнăй Советне суйлана вăхăтра та довереннăй пулса ĕçлесе хастарлăхне кăтартрĕ.

Хăйне довереннăйне çирĕплетнĕ кунах Федотăв йулташ агитаторсене пухса канашлу туса иртерчĕ. Канашлура тĕп ыйту тăрăх, Канаш суйлав округĕнчен РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене депутата суйлама тăратнă кандидатсем çинчен суйлавçăсене пухусенче тĕплĕн каласа ăнлантарма йышăнса хăварнă. **Арк. Нестĕрăв.**

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Парторганизацин районсенчи пухавĕсенче

Вăрнар

Майăн 26-мĕшĕнче ПСК(б) Парти Вăрнар организацин отчотпа суйлав пухăвĕ уçăлчĕ. Пухăва пурĕ 121 коммунис пухăнна.

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕн ĕçесем çинчен Обком секретарĕ Н. П. Павлăв йулташ доклад туса пачĕ.

Н. П. Павлăв йултăш доклачĕ тăрăх тухса калаçма 19 çын çырăнна. Пренире пурĕ 15 çын тухса калаçрĕç. Тухса калаçакансем Обкомăн ĕçĕсене хăйулăн критиклесçĕ. Пуху пысăк хастарлăхпа иртет.

Е. Ф. Филиппăв.

Çĕмĕрлĕ

Майăн 25-мĕшĕнче районри парторганизацин очотпа суйлав пухăвĕ уçăлчĕ. Пухун кун йĕркине çирĕплетнĕ хыççăн, пĕрремĕш ыйтупа—Парти Чăваш Обкомĕн ĕçесем çинчен ПСК(б)П Обком бюровĕн членĕ Л. С. Спасăв йултăш отчот туса пачĕ. Майăн 26-мĕшĕнче Парти Обкомĕн отчочĕ тăрăх прени пынă. Пренире 21 çын тухса калаçнă.

Пренире тухса калакансем Парти Чăваш Обкомĕ халăхăн ылханлă тăшманĕсене тăрă шыв çине кăларас ĕçне пысăк ĕçсем туни çинчен палăртрĕç. Кунпа пĕрлех çитменлĕхсем çинчен те чăрăнса тăчĕç. Çĕмĕрле районĕ—промышленăлăхлă район пулса тăрат. Апла пулсан та, республикăри организацисем районa начар пулăшаççĕ. Промышленăлăх йĕнĕпе ĕçлекен республикăри работникесем района пырсан, саватсене пырса та курмаççĕ, вĕсен ĕçĕсемпе интереслен-меççĕ.

Вăрман хуçалăхне йĕртсе пырасçĕ те Çĕмĕрле районĕнче начар пырăт. Хатĕрлевсĕн комиссариачĕ, çавнашкалах Сывлăха Сыхлав Комиссариачĕ районри хăйсене пăхăнса тăракан организацисене кирлĕ пек йĕртсе пыни çук. Çавна май ĕçсем те кайă йулса пыраççĕ.

Парти Обкомĕн инструктăрĕсем те районти инструктăрĕсене, пропагандиссене, кружоксене тивĕçлипе пулăшса пыни курăнмаст. Вĕсем районсене сахал пулаççĕ. Çĕмĕрле районĕнче парти вĕренĕвĕ начар пырат. Кружоксенче вĕренме учебниксем çитмеççĕ. Çаксем çинчен чарăнса тăчĕç тухса калакансем.

Парторганизацин отчотпа суйлав пухăвĕ Парти Обкомĕн политикăла сулăмне тĕрĕс, практикăла ĕçе çителĕклĕ,—тесе йышăнчĕ.

Майăн 26-мĕшĕнчех пуху ПСК(б) Парти райком ĕçсем çинчен райком секретарĕн—Новикăв йулташăн отчотне итлерĕ.

Майăн 27-мĕшĕнче райком отчочĕ тăрăх прени пуçланчĕ.

Лукин.

Тăвай

Парторганизацин районри отчотпа суйлав пухăвĕ пысăк хастарлăхпа иртрĕ.

Райком отчочĕ тăрăх тухса калакан йулташсем, райком ĕçĕнчи çитменлĕхсене хыта критиклесçĕ.

Районта уйрăмах политикăлăмассăлă ĕç начар тăрат. Ку тĕлĕшрен çак пример кăтартать. Иртнĕ çулта Кириллăва йултăш бригадир пулса ĕçлекен МТС хĕрарăм бригади республикĕпе малти вырăнта пулнă. Ку бригадăра политикăлă-массăлă ĕç те вăйлă пулнă. Кăçалхи çул бригадăна кирлĕ пек йĕртсе, пулăшса пыманнипе пула çуракире Кириллăва бригади кайа йулчĕ.

Вулав çурчĕсем кирлĕ пек ĕçлемеççĕ. Вĕсене райçутĕç пайĕ йĕнчен пулăшса, йĕртсе пыни çук.

Комсомол организаци те начар ĕçлет. ПССЛКС райкомĕ комсомолĕçсем çине тимлĕн пăхманни не Тепловс йултăша халăх тăшманĕ тесе комсомолран кăларнă.

Райком хăйĕн практикăлă ĕçĕнче политикăлă ĕçпе хуçалăх ĕçне пĕр-пĕрипе кирлĕ пек çыхăнтарса пыраймаст-ха. Çавăн пирки ĕç те хуçалăх ĕçĕсем кайа йулса пыраççĕ. Самахран, йалхуçалăх хатĕрлевĕсем тăрăх плана вăхăтра тултарса пыни çук. Финанс ĕçĕ те начар тăрат. Чылай çĕрте колхоз фермисенче çуртсем çитмеççĕ.

Коммуниссем çитменлĕхсене пĕтерме практикăлă çĕнсем пачĕç.

Пуху райкомăн политикăлă сулăмне тĕрĕс, практикăлă ĕçĕ вăтам тесе йышăнна.

Ласточкин, Ахтăмăв.

Комсомол хушшинчи политвоспитани ĕçне тивĕçлипе организацилемеле

Шăхасан. 1937 çулта 136 çын комсомола илнĕ пулсан, 1938 çулти пĕрремĕш квартăлта 151 çын илнĕ. Апрел тата май уйăхĕсенче тепĕр çавăн чухлĕ илнĕ. Çĕнĕрен 7 пуçламăш организаци тунă. Чылай пуçламăш организацисен йышĕ 20—25 комсомолеца çитнĕ.

СССР Верховнăй Советне суйлас кампани вăхăтĕнче 200 комсомолец агитатăр пулса ĕçленĕ. Халĕ РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕсене иртерес тĕлĕшпе ĕçлекен округри комиссисен членĕсем пулса 10 комсомолец ĕçлеççĕ, агитатăрсем пулма 100 комсомолец ытла уйарна.

Çамрăксене коммунисла воспитани парасси комсомолăн тĕп задачĕ. Комсомолеçсемпе çамрăксем валăççи 42 политшкулсемпе кружоксем организациленĕ.

Çапах та политвĕренÿ ĕçĕсенче çитменлĕхсем нумай-ха. Йамашри, Анаткас Кипечри т. ыт. политшкулсем заняçтисене комсомолецсем çурри те пухăнмаççĕ. Пропагандиссем (Матвеĕв, Ильин, Скворцов йулташсем т. ыт.) занятисене начар хатĕрленсе пыраççĕ, вĕренекенсене интереслентерекен материалсемпе тĕплĕн ăнлантарса памаççĕ, пĕр кружокра та вĕренекенсене ĕçхалăхĕн революцичченхи пурнăçĕпе паллаштармаççĕ.

Заняçтисене лайăх иртересси пропагандиссемпе ĕçленинчен килет. Хĕл хушшинче вĕсемпе 8 семинар туса иртернĕ. Анчах семинарсенче пропагандиссем хăйсене кирлĕ пулăшу илеймеççĕ. Пысăк ыйтусемпе, пропагандиссене хумхантаракан ыйтусем тăрăх лекцисем туса иртермен.

С. Соколов.

Циолковски йăчĕпе тăракан дирижабл вĕрену комбинатĕнчи (Мускав) 5-мĕш курсра вĕренекен студентсем хăйсен вĕренÿвĕнчен уйăрăлмасăр вĕрентекен пилот ĕçне вĕренеççĕ.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: (сулахайран) С. В. Ревзин, В. В. Уткин студентсем тата аспирант А. Г. Томилин авиасекстант пайĕсене вĕренеççĕ.

А. Иоселевич фото-укерчĕкĕ (Союзфото).

Чехословакири лару-тăру

Палла, халхи вăхăтра Чехословаки правительствин пуçлăхĕ Годжа Генлейн хушшинче Чехословакири лару-тăрува йĕркелесе парас тĕлĕшпе калаçусем пыраççĕ.

Çак кунсенех Годжа Генлейнпа иккĕмĕш хут тĕл пулмала.

Пирвайхи хут тĕл пулнă хыççăн, Генлейн, уй çинчен пĕлтернĕччĕ, Англи хаçачĕн корреспонденчĕпе калаçнă чухне Германи Чехословаки çине тапăнассипе тата Судет облаçне Германи çумне пĕрлештерессипе тÿремĕнех хăратса калаçнă.

Генлейн Чехословакире провокацилĕ ĕçсене халĕ те туса пырат, Майăн 27-мĕшĕнче Прагăра Генлейн хăйĕн организацисене террăра вăйлатасси çинчен, уйрăмах, компарти членĕсене тата Чехословаки çарĕнчи салтаксене хирĕç террăр вăйлатасси çинчен вăрттăн распоряжени пани палла пулнă.

Чехословаки телеграф агентствин пĕлтернĕ тăрăх, йулашки кунсенче Чехословакире тĕрлĕ облаçсенче Чехословаки çарĕнчи бойецсене апат начар çитереççĕ тесе суйа çамахсем, елексем сараççĕ. Оборонă министерствин апат-çимĕç йĕнчен çарта пурнăç çителĕклĕ таранах лайăххи çинчен пĕлтерне заявленинче пичетлесе кăларса, Чехословаки телеграф агентстви çав суйа çамахсем провокаци пулса тăраççĕ тесе палла тăват. Çар çинчен тата уйăн командирĕсем çинчен елек сарса çÿрекенсене хыттăн ответ тыттарасси çинчен распоряжени кăларнă.

Лару-тăру çивĕчленнĕ пирки министрсен кабинечĕ парламентăн çитес ларăвĕнче (майăн 31-мĕшĕнче) правительствăна хуçалăх йĕнĕпе кăна мар, тата государствăн обороны ыйтăвĕсем тĕлĕшпе те чрезвычайлă полномочисем парасси çинчен саккун проекчĕне тăратмала.

Майăн 29-мĕшĕнче муниципалитет суйлавĕсен иккĕмĕш турĕ пулса иртет. Суйлавсем 2.740 обшинăра пулса иртмелле. Çакăнсăр пуçне, майăн 29-мĕшĕнче суйлавсем Прага сывăхĕнчи вырăнсенче те пулса иртмеле.

(ТАСС).

Америкăри коммунисла партин Х-мĕш сĕесĕ уçăлнă

Майăн 26-мĕшĕнче Ньăу-Йоркра Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсенчи компартин Х-мĕш сĕесĕ уçăлнă. Сĕеса Америкăн 48 штатсенчен 1.500 делегат пынă.

Çавăн пекех сĕеса тăванла компартисен делегацийĕсем—Мексикăран, Кубăран, Канадăран, Францирен, Филиппин утравĕсенчен те пынă. Сĕесăн кун йĕркинче çакăн пек ыйтусем тăраççĕ: мирлĕ пурнăçшăн кĕрешекен çарлака демократилĕ фронт тăвасси çинчен, парти уставне йышăнса çирĕплетесси, конгресăн çитес суйлав кампани вăхăтĕнче тумали ĕçсен программине çирĕплетесси, тĕп комитета суйласси.

(ТАСС).

НЬĂУ-ЙОРК, майăн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсенчи коммунисла партин Х-мĕш сĕесĕ уçăлнă йатпа Ньăу-Йоркра массăлă митинг пулса иртнĕ, унта 22 пин çын ытла пулнă.

Компартин Тĕп Комитечĕн генеральнăй секретарĕ Браудер тухса калаçнă. Вăл фашисла хăрушлăхпа тата вăрçа хирĕç кĕрешме демократилĕ çарлака фронт тума чĕнсе калаçна.

Сĕес председателĕ Фостер çапла пĕлтернĕ, халхи вăхăтра Америка компартин ретĕнче 75 пин çын шутланат, комсомол организацинче—20 пин член пур,—тенĕ.

Митингра тухса калакансем Испанинчен тăрăна Америкăри тĕмиçе çĕр доброволеца хĕрулăн саламланă.

(ТАСС).

Австринче Гитлĕрла „административлă реформă"

Австри хаçачĕсенче Гитлерăн Австрине администраци йĕнчен çĕнĕлле йĕркелесси çинчен калакан приказĕ пичетленсе тухнă. Приказăра Австри çамаха пачах асăнман. Çĕршыва „Хĕвелтухăç провинци" тесе калана. Ана 7 облаç пайлана. Кашни облаçрах облаç пуçлăхĕсене фашисла пуçлăхсен шутĕнче тăракан Гитлĕрла чиновниксене лартнă.

(ТАСС).

Вăрман хатĕрлевĕ

Чăвашвăрмантрестне кĕрекен вăрман промышленнăç хуçайствисем йулашки вăхăтра питех те начар ĕçлеççĕ. Иккĕмĕш квартăл планне пĕр вăрман хуçайстви те тултарса пыраймаст.

Мĕн пур тресчĕпе илсен, вăрман хатĕрлес ĕçе иккĕмĕш квартăл планне майăн 25-мĕшне 17,7 процент, турттарса кăларассине 14,1 процент çеç тултарнă.

Хатĕрлене вăрмана механизациленĕ çулпа турттарса кăларасси пушшех те начар пырат. Мĕн пур çулсем тăрăх плана 11,7 процент çеç тултарнă. Хăшпĕр çулсем çак тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ (Канаш), хăшпĕрисем тин кăна ĕçе пуçлана: Сура, Акшул, Çарака çулĕсем.

Вăрман хуçайствисенче ĕç йĕрки çук. Сăтăрла ĕçсен йулашкисемпе татăкла вирлĕ кĕрешни курăнмаст. Çавăнпа та вăрман хуçайствинчи ĕçсем питех те кайа йулса пыраççĕ.

Çĕртме сухи планне туртарнă

АКАЙРИ (Елĕк р.) „Комбайн" колхоз çураки ĕçĕсене пĕтернĕ хыççăн, ирхи çĕртме сухине сухалас ĕçе пуçăнчĕ. Колхозра пурĕ 125 гектар çинче ирхи çĕртме сухине сухалаçа, райçĕрĕç пайĕ пана плана ытлашшипех тултарнă.

А. Зайцĕв.

Авиамоделĕн чаплă вĕçевĕ

Майăн 27-мĕшĕнче, кăнтăрла, Тушинăри аэродромран (Мускав) сывлăшa Михаил Зÿрин конструкцилесе тунă бензинла пĕчĕк моторлă самолёт моделне вĕçтерсе хăпартнă.

Авиамодел хăварт çÿле хăпарса часах çÿрсĕр йĕнеле кайса курçăн çухална.

Кăçхине ССР Союзĕн Косарĕв йăчĕпе тăракан Тĕп аероклубе çакăн пек пĕлтерÿ илнĕ: Михаил Зÿринăн моделĕ Мускав облаçĕнчи, Коммунистически районĕнчи Рыбаки йалĕ çывăхĕнчи вăрман хĕррине анна.

Малтанхи сведенисем тăрăх, модел тÿремĕн 24,5 километр таршшĕ вĕçнĕ. Ку вĕçев кăçалхи майăн 8-мĕшĕнче тунă рекордран иртнĕ. Ун чухне Михаил Зÿринăн авиамоделĕ 21 километр та 857 метр таршшĕ вĕçнĕ пулнă.

(ТАСС).

Колхозсенчи хыпарсем

Пысăк Чăраш йалсоветне (Çĕрпу р.) кĕрекен „Заря" колхоз кăçал 4 гектар çинче йăвăç тункатисене кăкласа акмали çĕр уçăлкки турĕ. Колхоз хал 4 гектар çинче вир акса хăварчĕ.

Н. Мефодйĕв.

Карапйалĕнчи (Сĕнтĕрвăрри р.) „Хастар" колхоз пахча-çимĕçсене лартса çитернĕ хыççăн, ирхи çĕртме сухине сухалама тытăннĕ. Пурĕ 42 гектар çинче ирхи çĕртме туса хăварна.

А. Пугачев.

Ответлă редактăр И. М. СЕМЕНАВ.

Столицăри „Зеленый театр"

Театр директăрĕн Йа. К. Федарăвăн статйи

Мускаври Горький йăчĕлле тăракан канупа культура паркĕнчи „Зеленый театр" ĕçлеме пуçланипа кăçал пилĕк çул тулат.

Çак „Зеленый театр"—çуллахи вăхăтра ĕçлекен театрсенчен чи пысăк театр пулса тăрат. Кунта куракансем ларакан залăна 20.000 çын шанасат. Залăри сас çалатакан системă—совет радиотехникин чи пысăк çĕнтерĕвĕ; çак системă тăрăх, театра килекен кашни тĕлте ларакан çын та сцена çинче калана сасса пĕр пекех илтме пултарат.

„Зеленый театр"—гигантин сцени çеç 1500 тăваткал метр вырăн йышăнат.

Театр ĕçне пахалăна чухне çакăн та асăрхамала: Çак театрăн пĕр енри чылай ĕçне пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕç ĕçлет, сцена çинче пырăкан спектакльсене—вĕсенчен нумайăшĕн акт артисем—вырăнсем çеç уйрăммăн вырнаçса тăрат, тесессĕн тĕрĕс те тĕрĕс пулмалла.

Палхас, унщăн çеç мар. Ытти театрсенче пыракан спектакльсене, çамахран, „Кармен", „Париж сулăмĕ", „Лапка Дон", „Мухтар" пĕчĕкснене театрăн сцени çинче йăлтах урăхла, пайăхрах та йанравлăрах туххаççĕ. Мĕншĕн? Мĕншĕн тесен театр декорацийĕн анлăшĕ, унăн вырăн, асăннă спектакльсенче кураймали йапаласене, тавракурамлăха чăн пурнăçри пек сутатса кăтартма май парат. Çак театра уйрăммăнах массăлă сценăсем çарлакăрах та тÿллирех, илемлĕрех пулса туххаççĕ.

Самахран, „Кармен" оперă пынă вăхăтра сценă çинче выляма нумай лашасем те кирлĕ пулаççĕ. Вĕсене „Зеленый театр" сцени çине кĕртме çамăллăнах пулат, çапла вара спектакльăн художествалă йĕнчен те, чăнлăх тĕлĕшĕнчен те туллин тухат.

Çак театр умĕнче тăракан малашнехи тĕп задача—граждан вăрçи çинчен йатарласа çырна спектакльсем кăтартасси пулса тăрат. 1939 çулта Малый театри акторсен коллективĕ çак „Зеленый театр" сцени çинче А. Н. Толстой çырна „Оборона Царицына" йатла спектакльне выляса пама шутлат.

Çак çулхи ийун уйăхĕнче Мускаври оперетта театрĕ „Малиновкăри туй" йатла массăлă спектакльне çак театр сцени çинче вылямалла пана тăрат, ку спектакльсене республикăн тава тивĕçлĕ артисĕ Йаронă лартат, вылякансен йышĕ 300—400 актор таран пулат.

Ку спектакльсене граждан вăрçи вăхăтĕнчи пĕр палла епизода, Котовскин легендарлă дивизийĕ Махно бандине хирĕç паттăррăн кĕрешнине кăтартса парат. Сценă çинче утла çар та пулат, вăл сценă хĕрлĕ кавалериссем махновеçсемпе мĕнле çапăçнине лайăх кăтартат. „Малиновкăри туй" декорацин макечĕне директи йышăна та пĕтерĕ, ырлана.

Ийул уйăхĕнче „Зеленый театр" сцени çинче Мускаври Камернăй театрăн гастролĕсем пулаççĕ, вĕсем „Кочубей" йатла спектакльне выляса параççĕ, ку спектакльне ражиссăр орденоносец Охлопкăв лартат. Пĕесă халăх геройĕ хĕрлĕ партизан Кочубей çинчен, вăл троцкиссен кайашĕсемпе мĕнле кĕрешни çинчен калаçа парат. Спектакльне массăлă сценăсем те пулаççĕ (хĕрлисемпе шуррисен хушшинчи çапăçу).

Театр вăл вăхăтра кăтартса парасси хĕçпăшалсенчен, йалавсенчен, фотоукерчĕксенчен, хаçатсенчен тата ытти документсенчен выставка организацилет.

Май уйăхĕн вĕçĕнчен пуçласа ийун уйăхĕн пуçламăшне çити „Зеленый театр" ССР Союзĕн Ленин орденлĕ Академи Пысăк театрĕн концерчĕсем вунăкунлăхне туса иртерет, ку концертсенче халăх артисĕсем, тава тивĕçлĕ артиссем тата пысăк театрăн мĕн пур коллективĕ пулаççĕ.

Çак вунăкунлăх хыççăн ларуесен, талантла çамрăксен, симфонилĕ оркестрсен, хорсен, ССР-чи халăхсен таша коллективĕсен т. ыт. вунăкунлăхĕ пуçланат.

Ийунĕн 16-мĕшĕнче театр пролетарилĕ аслă писачĕн А. М. Горькин асăнса тата унăн творчествинче кăтартас шутпа йатарласа тунă программă тăрăх вечĕр туса иртерет.

Тĕнчере чи пысăк екранлă театр (екран çуллĕшĕ виçĕ хутлă çуртпа танлашат), спектакльсемпе концертсем пулман хушăра, чи лайăх совет кино-картинисене, çавăн пекех, уйăхçĕршывсенчен килнĕ картинăсене кăтартат. Кино-гигант чи лайăх аппаратпа ĕçлет.

Кунсăр пуçне театрăн сценине физкультурниксем те усă кураççĕ. Самахран, часах ак мала тухас тĕлĕшпе кĕрешекен боксерсен тĕлпулăвĕ пулмала.

Театрăн сцени çинче çак çулта политикăла пысăк ĕçсем пулса иртеççĕ: РСФСР Верховнăй Советне суйлавсене тата Хĕрлĕ Çар çĕртне асăтас йатпа митингсем, чукун çул çинче ĕçлекенсен кунĕ, авиаци кунĕ т. ыт. те.

Тăватă çул хушшинче театра икĕ мĕлйуна йахăн çын кĕрсе тухнă. Кăçалхи çул театра 600 пин çын пулма пултарат.

Пайан театрсенче клубсенче. сатсенче:

Пайан кино-театрта

Сасăлă, нумай сăрлă, çĕнĕ фильм „Сказка о рыбаке и рыбке"

Сасăлă, етнографиле çĕнĕ фильм „Монгоней"

Программăра Союзкиножурнал № 23.

Чăваш республикĕнчи армансен трестне

Аслă економист-плановик кирлĕ

Ĕçукçи килĕшÿ тăрăх

Адрес: Шупашкар, Урицкăйа урамĕ. 13. „Мельтрест", управляющи патне.

3—2

Шупашкарти йуридически шкула бухгалтер тата завхоз кирлĕ.

ЧĂВАШСТРОЙТРЕСТРА

малтан ĕçлесе пурăннă рабочисен, инженерла-техникла работниксен тата служащисен ГОСУДАРСТВА ЗАЙОМĔСЕН ОБЛИГАЦИЙĔСЕНЕ илме пыма чĕнеççĕ Облигацисене апла илмели срук кăçалхи ийунĕн 1-мĕшĕнчен, Ку срук иртсен облигацисене перекет кассине параççĕ.

3—2

Шупашкарти „Кожубрянь" артелне

Бухгалтер (материаллă пайа) 1
Бухгалтер (расчот пайне) 1
Бухгалтер (атă пушмак производстви пайне) 1
Бухгалтер помошникĕ 1
Хуралçăсем тата уборщицăсем КИРЛĔ

Занятни вăхăтĕнче ыйтса пĕлмелле, улица Ленина, дом № 6.

Правлени.

3—1

Чăваш республикĕнчи Вăрмана сыхласа устерекен управленийе

Техник (вăрман хуçалăхĕ тăрăх), Машинистка, Машинистка секретар, Ĕçсене туса пыракан кирлĕ.

АДРЕС: г. Чебоксары, ул. Урицкого, дом № 36, нижний этаж.

Шупашкарти Акушер шкулĕ

1938—39 вĕренÿ çулĕнче

Пĕрремĕш курса вĕренекенсене илесси çинчен пĕлтерет

Вĕренмелли срук икĕ çул.

15 çулхисенчен пуçласа 35 çулхисем таран хĕрарăмсене тата арçынсене те, вăтам шкулта çичĕ çултан кайа мар вĕренни чухлĕ пĕлÿ илнисене йышăнаççĕ.

Заявленисене ийунĕн 20-мĕшĕнчен пуçласа августăн 1-мĕшĕччен йышăнаççĕ.

Заявленисене шкул директăрĕ йăчĕпе çак документсемпе пĕрле (подлинниксем кирлĕ) памала:

1. Хăш çулта çуралнине кăтартакан свидетельстви.
2. Вĕренни çинчен свидетельстви.
3. Государствăн емеллекен учрежденийĕнчен илнĕ ĕненĕртÿ, ун çинче вĕрение кĕрекенĕн сывлăхĕ медицинă шкулне вĕренме кĕме йуравни не кăтартни пулма кирлĕ.
4. Икĕ фото-карточкă (хăй алăпуса çирĕплеттерни)

Кусемсĕр пуçне 16 çултан иртнисем паспăрт пĕрле илсе килеççĕ.

Испытанине тăма ирĕк панисене хут йарса чĕнеççĕ. Чĕннĕ тăрăх çеç килмеле. Чĕнмесĕр килнисене испытанине кĕртмеççĕ.

Испытанисем августăн 1-мĕшĕнчен пуçласа 20-мĕшĕччен пыраççĕ.

Шкула кĕрекенсене пурне те математикă тăрăх (арифметикă, алгебрă, геометри), физикă, географи, вырăс чĕлхи тата политграмотă тăрăх (туллимар вăтам шкул программи чухлĕ) испытани тăваççĕ.

Çичĕ çуллă шкултан тĕп предметсемпе „отлично" тата ыттисем (рисовани, черчени, йурласси, музыкă тата физкультура) „лайăх" паллăран кайа мар паллăсемпе вĕренсе тухнисене испытанисĕр илеççĕ, çавнашкалах тата тулли вăтам шкулсенчен вĕренсе тухнисене испытани тумаççĕ.

Испытани тытнисене августăн 21-мĕшĕнчен 25-мĕшĕччен вĕренекенсен шутне кĕртеççĕ.

Вĕренекенсене валăççи общежити пур, вĕренине кура стипенди параççĕ.

Занятисем сентябрĕн 1-мĕшĕнче пуçланаççĕ.

Шкул адрĕсĕ: гор. Чебоксары, Волгоморская, Акушерская школа.

ДИРЕКЦИ.

3—3

Уполномоченный Чувашглавлита № 266

Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 408